Горский С. К.В. Ивановăн чĕлхипе стилĕ / С. Горский // Тăван литература утăмĕсем. – Шупашкар, 1974. – С. 259-266.

СЕМЕН ГОРСКИЙ

# К. В. ИВАНОВĂН ЧĔЛХИПЕ СТИЛĔ

Чăваш литературин Октябрьченхи историйĕнче И. Я. Яковлевпа К. В. Ивановăн ячĕсем тивĕçлипех пысăк вырăн йышăнаççĕ. Яковлевпа Иванов ĕçĕсене мĕн чухлĕ ытларах тĕпчетĕн, вĕсен пултарулăх кунçулĕ çавăн чухлĕ уççăнрах палăрма тытăнать.

1940 çулта, çуралнăранпа 50 çул тултарнă юбилей кунĕсенче, К. В. Иванова чăваш литература чĕлхин никĕсне хываканĕ тенĕччĕ. 1968 çулта, И. Я. Яковлев çуралнăранпа 120 çул, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çуралнăранпа 100 çул тултарнине хисепленĕ чухне, чăваш литература чĕлхин никĕсне хываканĕ И. Я. Яковлев пулать тени палăрчĕ. И. Я. Яковлев лексика, морфологи, синтаксис нормисене Октябрьченхи тапхăрта çирĕплетни çинчен, вырăс чĕлхинчен илнĕ сăмахсене, хутлă сăмахсене вăл мĕнле çырма палăртни çинчен ун чухне «Ялав» журналăн сентябрьти номерĕнче (1968) тĕплĕн çутатса панăччĕ.

Халĕ, К. В. Иванов пултарулăхĕ çинчен сăмах хускатнă чухне, «литература чĕлхин никĕсне хываканĕ» текен сăмаха урăхларах—тарăнрах та тĕрĕсрех ăнланмалла. Поэт пултарулăхĕн никĕсĕ çинчен 20 çул ĕлĕкрех çырнисем çумне хăшпĕр çĕнĕ шухăшсем хушса пама тăрăшар.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ: чăваш çеç мар, вырăс, украина, тутар, пушкăрт, мăкшă, мари, удмурт çыннисем те «Нарспи» поэмăна хăйсен тăван чĕлхипе кăмăлласах вулаççĕ. Халĕ çак вилĕмсĕр паха произведени демократи çĕршывĕсене те çул хыврĕ. Вулакан поэмăра кăтартнă тискер пурнăçа сивлет çеç мар, поэтăн ăсталăхне мухтать, хăйĕн кăмăлне произведенин илемлĕх мелĕсемпе савăнтарать.

Мĕнрен килет-ши К. В. Иванов произведенийĕсен

иксӗлми пахалӑх хӑвачӗ? Сӑмах майӑн каласан, поэт произведенийӗсен пахалӑхӗ, унӑн вакрах произведенийӗсенчен пуҫланса, «Нарспи» поэмӑра чи ҫӳлти тӳпене ҫитет, поэтӑн вӗренӳ ҫул-йӗрне палӑртать. К. В. Ивановӑн кашни произведенийӗнчех илемлӗх стилӗн тӗслӗхӗсене кӑтартма пулать, анчах тӗслӗхсем ытларах «Нарспи» поэмӑра тӗл пулаҫҫӗ, унта вӗсене «ҫӑрарах» панӑ.

К. В. Иванов произведенийӗсен илемлӗхӗ сӑнарлӑ шухӑшпа унӑн формине — пӗр пӗтӗм пӗрлӗхе пысӑк пахалӑхпа йӗркелесе панинчен килет. Поэт произведенийӗсен идейисем мул хуҫисен обществӑри, килйышри ирсӗрлӗхне, ҫамрӑксен обществӑри танмарлӑхран килекен телейсӗр юратӑвне, тӗн инкекне т. ыт. те кӑтартаҫҫӗ. Пур наци вулаканӗшӗн те ку картинӑсем — тӳснӗ, чӑтнӑ пулӑмсем; интернационаллӑ литературӑра вӗсем чӑвашсенне ҫывӑх ытти тӗрлӗ енсемпе палӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа пурин кӑмӑлне те хускатаҫҫӗ.

К. В. Иванов произведенийӗсен форми вулаканшӑн кӑмӑллӑ, мӗншӗн тесен вӑл авалтан пыракан халӑх поэзин илемлӗх стилӗн никӗсӗ ҫинче, чӗлхе грамматикин мӗнпур тытӑмӗпе ытти тӗрлӗ мелсем ҫинче никӗсленсе тӑрать; вӑл вулаканӑн чунне-юнне хускатать, произведенисен шухӑшне сулмаклӑ тӑвать. И. Я. Яковлевӑн литература чӗлхин нормисене ҫирӗплетме пулӑшнипе, Октябрьччenхи ҫич сыпӑклӑ силлабика сӑвӑ виҫине чи пысӑк пахалӑха ҫитернипе, халӑх поэзин поэтика синтаксисӗпе туллин усӑ курса илемлӗх стильне пуянлатнипе К. В. Иванов произведенийӗсем вулакана ҫывӑх. Шӑпах ҫавӑнпа К. В. Иванов литература чӗлхин илемлӗх стилӗн никӗсне хываканӗ пулать те ӗнтӗ. Вӑл ҫич сыпӑклӑ силлабика сӑвӑ виҫипе хӑйӗн кермен пек чаплӑ ҫуртне — «Нарспи» поэмӑна халӑха панӑ, анчах поэзи ҫулӗ вӗҫӗмсӗр анлӑ, хальхи илемлӗх стиль ҫул-йӗрӗшӗн ку поэма — историн пӗр тапхӑрӗ ҫеҫ. Иртнӗ тапхӑр пулин те, тупӗр хут калар, вӑл пурне те килӗшет.

Пӗтӗмӗшле каланипе илемлӗхӗн мӗнпур ыйтӑвӗсене палӑртма май ҫук, ҫавӑнпа хӑшпӗр ыйтусене уйрӑмшарӑн хускатма тӑрӑшар.

Сӑмахран, мӗншӗн К. В. Иванов, виҫ-тӑват сӑвӑсӑр пуҫне, ытти произведенийӗсене пурне те ҫич сыпӑклӑ силлабика виҫипе ҫырнӑ, ҫакӑн йышши сӑвӑ пахалӑхне чи ҫӳлти виҫине ҫитерме пултарнӑ?

Ҫичӗ сыпӑклӑ силлабика сӑвӑ виҫи—чӑвашӑн авалтанпах ҫирӗпленнӗ чи паха сӑвӑ виҫи. Истори тапхӑрӗсен-

че вăл анатри чăвашсене те, турисене те тивĕçтернĕ мĕншĕн тесен диалектсем хушшинче ударени системинчи уйрăмлăхсем ăна пуçпулса тама ирĕк панă. Çич сыпăклă силлабика виçишĕн сыпăксен шучĕ тĕрĕс пулни кирлĕ, çав вăхăтрах ударениллĕ сыпăкпа ударенисĕр сыпăк тĕрĕс мар ылмашнине те вăл килĕштерме пултарать: пĕрремĕш, иккĕмĕш стопасенче хорейпа ямб, виççĕмĕш стопара дактиль, амфибрахи, анапест ылмашса пынине вăл тиркемест. Çичĕ сыпăклă силлабика виçинче силлабо-тоника виçи те чылаях палăрать: 1. **Çич хут виç те пĕр хут кас** (хал. сăм.); 2. **Тимĕр йыттăн сӳс хӳре** (хал. сăм); 3. **Атăл хĕрне çитмесĕр, атта хывса йăтас мар** (хал. сăм.) т. ыт. те.

Сăвăра силлабо-тоника виçи палăрнă чухне строфа час-часах 8—7—8—7 сыпăклă стихсенчен тăрать, сыпăксен шучĕ урăхла та ылмашать.

Тен, авалрах, чăваш чĕлхинче диалектсенчи ударени системин уйрăмлăхĕсем пуçланса кайиччен, силлабо-тоника виçеллĕ пĕрлĕх ытларах пулнă? Тен, ударени системин диалектри уйрăмлăхĕсен аталанăвне силлабика виçеллĕ сăвă пуçласа янă, ударениллĕ сыпăкпа ударенисĕр сыпăка тĕрлĕ сăлтавпа тĕрĕс мар ылмаштарни юрă кĕввине пăхăнниничен килнĕ? Ку ыйтусем юри тĕпчеме юрăхлă.

Çакна астăвар: силлабика сăвă виçи калаçу чĕлхине силлабо-тоника виçинчен çывăхрах тăрать. Йăла темипе çыхăнакан текстра уйрăмах çичĕ сыпăк калăпăшĕпе тунă предложенисем нумай тĕл пулаççĕ. Акă Ф. П. Павловăн «Ялта» драминчен тĕслĕхсем илер: **1. Ĕнисене мĕн патăн? 2. Ман пĕртте ыйăх килмест. 3. Мĕншĕн-ха çилленетĕн? 4. Каях, эппин. Чармастăп. 5. Э, вăрманти тăмана! 6. Акă эпĕ килтĕм те... 7. Эпир хĕр паратпăр-çке!**

Яланхи калаçуран хăшпĕр тĕслĕхсене илер: **1. Аçта кайса кĕмелле? 2. Пирĕн мĕнле чăтмалла? 3. Сăмах — салакайăк мар. 4. Йытти хӳрине хушать. 5. Халăхпа пĕр пулмалла. 6. Тем тесен те килĕшет. 7. Пĕр сăмах та килĕшмест** т. ыт. те. (Предложенисене юриех ĕлĕкхи пурнăçран илнĕ.)

К. В. Иванов халăх чĕлхине калама çук аван пĕлнĕ, халăх поэзине ятарласа пуçтарнă, тĕпченĕ, çавăнпа çак никĕс çинче шăрçалантарнă произведенисен илемне эпир çăмăллăн, пысăк кăмăлпа йышăнатпăр. Çичĕ сыпăклă силлабика виçипе çырнă текст юрă кĕввисемпе те паха çыхăнать, ытах вĕсем пĕр виçене лармасан, чĕлхере

вĕсене йĕркелесе пĕр карта лартмалли мелсем пур: текст сыпăкĕсем кĕвĕ виçинчен ытларах пулсан, кĕске ă, ĕ уçă сасăсем май килнĕ вырăнсенче тухса ÿкеççĕ (сăмахран: Эпир панă укçине сĕтел ури тай(ă)личчен). Текст сыпăкĕсем кĕвĕ виçинчен сахалрах пулсан, тĕрлĕ татăксем: ах(ех), ай, ой; та(те), ай союзсем е татăксем кирлех мар чухне те кĕртсе лартни тĕл пулать. Калаппине çирĕплетме пĕр тĕслĕх çеç илер:

Чун хурланать, чĕрем макрать те,
Чун хурланать, чĕрем макрать —
Кампа та ларса ай пуплем-ши?
Кампа ларса ай пуплем-ши?

*(Ф. Павлов, «Ялта» драма.)*

К. В. Ивановăн кун йышши тĕслĕхсем çук. Сăвă тексчĕ унăн пĕр кĕвĕллĕ, çавăнпа пĕр кĕвĕпе юрланине те килĕштерет, анчах вăл янравлăх енчен нумай енлĕ. çавăн пирки ăна, ытти халăх юррисем пекех, сыпăксен шутне чакарса та, хушса та юрлама пулать. Çак ăсталăхра К. В. Иванова Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче музыка теорине вăтам шкул виçипе пĕлни пулăшрĕ пулас.

Паллах, К. В. Иванов кăранташпа, краскăпа ÿкерчĕксем тума пĕлни те унăн стилĕн пахалăхне ÿстерме пулăшнă. Унăн «Нарспи» поэмăри эпизочĕсем картина çинчи пекех куç умне тухса тăраççĕ.

Калас пулать, К. В. Иванова обществăри анлăрах çыхăнусене кăтартма çич сыпăклă силлабика виçи час-часах хăйĕн ансăрлăхĕпе кансĕрлет, çавăнпа та вăл анлăрах картинĕсене кăтартмалли мелсем халăх поэзийĕнче те, вырăс литературинче те шырать. Çав вăхăтрах халăх поэзийĕнчи тĕслĕхсем тăрăх анлă период формисем парать, вĕсемпе предложенисене анлăлатса, пĕр пĕтĕм анлă картина тăвать. Час-часах çыннăн кулленхи ĕçĕсене пĕр йышши членсемпе йĕркелесе, пĕр çыхăнуллă тулли сăнар парать, ял сăн-сăпатне пĕр пĕтĕм картинăпа кăтартать, çак йĕркепе грамматика ыйтăвне илемлĕх стилĕн паха мелĕ туса хурать.

Анлă шухăша пĕр пĕтĕм картинăпа кăтартма кирле пулсан, К. В. Иванов, 4 стихлă строфасене пилĕкшерĕн пĕрлештерсе, 20 стихлă строфапа пĕр-пĕр эпизода туллин кăтартать. Эпизод чылай анлă пулсан, ик-виç 20 стихлă строфапа чылай анлă пĕр картина сăнласа парать. Акă пĕр тĕслĕх:

Пуш уйахĕн вĕçĕнче
Хĕвел пахрĕ ашатса,
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлче васкаса.
Тусем, сăртсем хуп-хура
Юрĕ кайса пĕтнĕрен,
Тухать курăк çăп-çăра
Хĕвел хытă хĕртнĕрен.
Сивĕ, хаяр хĕл иртет,
Каять йĕрсе, хурланса;
Сивĕ куççульпе йĕрет
Иртнĕ куншăн хуйхăрса.
Путăксемпе, варсемпе
Çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет,
Анчах, мĕнле йĕрсен те,
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет.
Хĕл куççулĕ шавласа
Юхса кайрĕ çырмара.
Ачи-пăчи выляса
Чупса çӳрет урамра.

*(К. Иванов.)*

«Нарспи» поэма пĕтĕмĕшпе 14 пайран (юрăран) тăрать. Поэмăн пĕрремĕш «Силпи ялĕнче» юррине 20 стихлă 8 строфа кĕрет. Эпир кунта пĕрремĕш юррин пуçламăш строфине илтĕмĕр. Художник пĕр ыйрăнтан пăхса ӳкернĕ пек, поэт çуркунне картинине сăмахпа сăнласа парать.

Çуркунне çывхарса пынине, хăват илсе çитнине поэт пысăк ăсталăхпа кăтартнă. Мĕн çитмест ку картинăра? Тен, поэт кайăксем вĕçсе килнине кăтартма маннă? Анчах ку енчен тиркеме сăлтав çук. «Пĕр шăнкăрч çуркунне тумасть», — тенĕ пек, пур çĕрте те кайăксен юрри илтĕнмест-ха; ун çинчен поэт малалла, çур кунĕсем туллин палăрнине сăнанă чухне, тивĕçлĕ сăнласа панă:

1) Пур çĕрте те кайăксен
   Лайăх юрри янăрать.
2) Çӳлте, пĕлĕт айĕнче,
   Тăри юрри илтĕнет.

*(К. Иванов.)*

К. В. Иванов ăсталăхĕ вăл пурнăçа халăх куçĕпе пăхнинчен, халăх ăстăнĕпе хакланинчен те килет. Тĕслĕхшĕн поэт çурхи шыва хĕл куççулĕпе танлаштарнинс

илер. Ĕлĕкхи вăхăтра чăваш хăйĕн тавракурăмне ырă та усал (дуализм) енĕпе палăртнă. Унщăн турăсем те, кайăксем те, курăксем те ыррисемпе усаллисем пулнă. Ыррисем унăн пурнăçĕнче — усăллă, усаллисем сиенлĕ пулнă. Ырă турă, этем хутне кĕрсе, сив çанталăка пĕçертет, вара хаяр сивĕ, куççуль кăларса, çырмасемпе юхса каять. Акă чăваш философийĕ поэтăн сăнарлă чĕлхипе мĕнле тачă çыхăнса тăрать; ĕмĕрсем хушшинче йĕркеленнĕскер, вăл, пейзажа кĕрсе, илемлĕх стильне пуянлатать. Асăрхамасăр пăхсан, кунта метафора шыранипех çырлахма пулать, тимлĕ куç чăвашăн авалхи философине асăрхаса юлать.

Малалла поэмăн «Атте-анне» ятлă 13-мĕш юррине илер. Ана поэт диалог йĕркипе панă. Ку мелпе вăл персонажсен характерне туллин уçас тĕллев тытнă. Илемлĕх стилĕ енĕпе илсен, тӳрĕ пуплев персонажсен ăшри шухăшне чĕррĕн, туллин, пĕр пытармасăр кăтартма май парать. Автор кунта персонажсене 20 стихлă строфапа каларçтармасть: апла тусан, сăвă форми персонажăн шухăшне ытлашши сарнă е пĕрнĕ пулĕччĕ. Кашни персонаж хăйĕн шухăшне вăраммăн та, кĕскен те калама пултарать: унăн ирĕкĕ поэма авторĕнчен килмест. Час-часах персонаж хăйĕн шухăшне тепĕр персонаж пӳлнипе каласа пĕтермесĕрех вĕçлеме пултарать. Çакна К. В. Иванов асрах тытса тăнă. Унăн ăсталăхĕ Михетер сăнарне 13-мĕш юрăра кăтартнинчен уççăн курăнать.

Михетер кунта хĕрне ӳкĕте кĕртес тĕллевпе калаçать. Вăл хăйĕн «турă панă тивлечĕ» пăсăлнипе хурланать. Хĕрĕн телейĕшĕн ашшĕ мул пухса тертленнине аса илтерет. Нарспи ашшĕне хăюллăн «пуянлăхра анчах мар, ыр курасси çыннинче» тесе хурать. Михетер Нарспие хăйĕн пуянлăхĕпе тепĕр каччă тупса савăнтарасшăн килне пыма чĕнет. Нарспи вара ашшĕне тӳрремĕнех питлесе: «Саншăн çавă ырлăх мĕнпурĕ те укçара», тесе хурать, çак сăмахсемпе ашшĕн сăнарне туллин палăртать. Юлашки пайĕнчен куратпăр: тĕнче тытăмĕ мул пулать тесе шутлакан Михетер хăйĕн мулне пула пуçне çиет.

Çапла вара, К. В. Иванов сăнарсене витĕмлĕ, ĕнентерӳллĕ туни, ытти мелсемпе пĕрлех, тӳрĕ пуплевсемпе усă курнинчен те килет. Çак майпа та произведенин пахалăхне вăл калама çук çĕклет.

Чĕлхе ăсти пулни, унăн тытăмне тĕплĕ пĕлни К. В. Иванова чапа кăларчĕ те ĕнтĕ.

Анатри чăвашсен ударени системине К. В. Иванов силлабика сăвă виçинче чи çÿллĕ пахалăха çитерни пирĕншĕн пуриншĕн те паллă. Кунсар пуçне, вăл тата тепĕр енĕпе чăваш чĕлхи çепĕçлĕхне хускатать: тури чăвашсем хытă вариантпа калакан сăмахсене К. В. Иванов ялан пекех çемçе вариантпа парать: **йĕрсен(макăрсан), хир (уй), кĕрлет (карлать), инçетрен (катаран), хирĕçтерме (харкаштарма), тӳрлетес (юсас)** т. ыт. те. Ку тĕслĕхсене 1-мĕш юрăран çеç илнĕ, 14 юрăра, йышлă пирки, кун пек вариантсем «Нарспи» поэмăна çепĕç кĕвĕлĕх параççĕ. Çепĕç калани текстшăн кирлех мар пулсан, К. В. Иванов витĕмлĕ каламалли мелсемпе (логикăллă ударени, инверсиллĕ предложенисем, икĕ хут калани т. ыт. те) усă курса, асăрхаттарнă çирĕп кĕвĕ палăртать.

К. В. Иванов чылай сăмаха, И. Я. Яковлев пекех, тулли формăпа çырать: ырă, ватă, çакă, каятăп, каяççĕ т. ыт. те. Анчах ку йĕрке И. Я. Яковлевшăн формăна формăшăн çырнипе палăрать. К. В. Ивановшăн тулли форма тулли пĕлтерĕшпе, сăмаха палăртса каланипе çыхăнать те илемлĕх стилĕн хăйне евĕрлĕ мелĕ пулса тăрать. Пĕр çĕнĕлле ăнлантармалли тĕслĕх çеç илер:

Куçĕсемпе пăхнă чух,
Каччăн чĕри çĕкленет.
Çӳхе тути кулнă чух,
Каччă чунĕ çемçелет.

*(К. В. Иванов.)*

(«Чăваш юмахĕпе халапĕсем» кĕнекерен. 1908 ç.)

Ку текста 1957 çулта тухнă К. В. Ивановăн «Çырнисен пуххи» кĕнекере юсаса, икĕ хутĕнче те каччă сăмах вырăнне «каччăн» лартнă.

Пирĕн шутпа, К. В. Иванов тексчĕ тĕрĕсрех, мĕншĕн тесен текст (е юрă кĕвви) сасă ылмашнине юрататъ; палăртса каланă чухне пĕрремĕш сăмахне улăхакан сасăпа калани, иккĕмĕш сăмахне анса пыракан сасăпа, палăртмасăр калани килĕшет. Пĕр тĕслĕх юрăран илер: «Анатран хăпарать шурă пăрахут...» Кунта та малтан каланине «Анатран хăпарать» сăмахсен пĕрремĕш кĕвви иккĕмĕш хут юрланинчен урăхларах илтĕнни çирĕплетсе парать.

Çавăнпа та Н. И. Ашмарин каччăн чĕри, каччă чунĕ сăмах майлашăвĕсенчен япала ятне иккĕшне те камăнлăх падежĕ тесе вĕрентнĕ.

Фонетикăпа, морфологипе çыхăнакан тĕрлĕ пулăмсем поэтика синтаксисĕн составĕнче илемлĕх стилен калама çук пысăк тĕслĕхĕсем пулса тăраççĕ. Сăмах майлашăвĕсем, логика ударенине пула вăйлă, нумай енлĕ интонаципе каланипе, текста çĕкленӳллĕ, витĕмлĕ янăравлăх параççĕ. Сăмахран: **1. Килчĕ ырă çуркунне, килчĕ ячĕ ăшăтса! 2. Шавлать, кашлать сĕм вăрман. 3. Сасартăках илтĕнчĕ ура сасси пăлтăртан. 4. Аван иртрĕ пурнăç хĕрĕн çулĕ туличчен** т. ыт. те.

Обращени те хăйне евĕр илемлĕх стилĕн мелĕ пулса тăрать. Пĕччен е икĕ хут юнашар тĕл пулакан обращени тĕрлĕ пĕлтерĕшĕпе, функципе палăрса, сăнарсене уçса пама пулăшать. Сăмахран 1. Кăмăллăн каланипе палăрать: **Нарспи, хĕрĕм, пил сана!** 2. Хăраса чун хавалĕпе каланине кăтартать: **Сетнер! Сетнер! Тытрĕç-çке! Тăр, тăр! Тарса хăтăлар.** 3. Ылханса, пĕтĕм курайманлăхпа каланине пĕлтерет: **Сетнер, йытă, кĕççе пит, манăн хĕре эс çирĕн!**

Пĕр йышши членсене — глагол-сказуемăйсене эрешлесе çыхăнтарнипе К. В. Иванов пĕр 20 стихлă строфара Нарспин портретне парать, тепĕр 20 стихлă строфапа Нарспие вăйă вăхăтĕнче кăтартать, çав виçеллĕ йĕркепех Нарспин кулленхи ĕçне сăнласа парать. Пирĕн ума çапла пĕтĕмĕшле кăтартнă уççăн палăракан аплă сăнар тухса тăрать.

Ирех тăрать, тумланать,
Нарспи ĕçе тытăнать:
Е пурçăн çип илет те
Юрла-юрла тĕрĕ тăвать;

Е çĕлеме ларать те,
Çĕвви шăрçа пек пулать,
Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă
Пĕр кĕрет те пĕр тухать;

Е пир тĕртме ларать те
Вылянтарать ăсине;
Е хултăрчă тытать те
Çипне тиет çĕррине;

Е сак çинчи кушакĕ
Питне çăва пуçласан,
Апат хатĕр хăнашăн
Алли-ури çăмăлран...

Аван иртрĕ пурăнăç
Хĕрĕн çулĕ туличчен,
Ашшĕ килне хăтана
Çичĕ ютран киличчен.

*(К. В. Иванов)*

К. В. Иванов произведенийĕсен илемлĕх стильне тĕпчемелли ыйтусем вĕçĕмсĕр нумай, вĕсем çинчен ку т... ранччен чылай çырнă, çапах та ун произведенийĕсен илемлĕх стилĕ çинчен пысăк ĕç çырмаллах!

## ПУШКАРТСТАН АСЛĂ ПОЭТĂМĂРА ЧЫСЛАТЬ

### Туслăх каçĕ

Пушкăртстан... Эпĕ кунта темиçе хут та пулса курнă. Анчах кашни килмессерен куçăм умне çĕнĕрен-çĕне сăнсем туха-туха тăраççĕ.

Пирĕн мухтавлă ентеш, СССР космонавт-летчике Андриян Николаев Пушкăртстан космосран хурăн çулçи пек курăнать тени аса килет. Унăн çĕрĕ çине самолет анса ларсассăнах, курай кĕвви чĕрене хумхантарать, темĕнле асамлăн тыткăнлать вăл мана. Ара, питĕ те тăванлă-çке эпир! Çавăнпа пирĕншĕн Пушкăртстан кĕвви-юрри те, сăвви-поэми те çывăх. Эпир унăн писателĕсене аван пĕлетпĕр, пире те лайăх пĕлеççĕ вĕсем.

Пушкăртстан çулсерен улшăнса, çĕнелсе пырать. Ку пирĕн чун-чĕрере ырă туйăм çуратать. Çак çĕр çинче чăваш поэзийĕн классикĕ Константин Васильевич Иванов çуралса ӳснĕ, пурнăç çулĕ çине тухнă. Пушкăртстан пирĕн поэтăмăрăн ырă ятне яланах асра тытать, ăна сума сăвать.

Кăçалхи июнĕн 4-мĕшĕнче Уфара Мажит Гафури ячĕпе хисепленекен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ Пушкăрт академи драма театрĕнче К. В. Иванов çуралнăранпа 90 çул тултарнă ятпа туслăх каçĕ пулса иртре. Ăна СССР писательсен Союзĕн правленийĕн секретаре, пушкăрт писателĕсен Союзĕн правленийĕн председателĕ Асхат Мирзагитов уçрĕ. Унтан пирĕн делегаци руководительне, КПСС Чăваш обкомĕн секретарьне А. П. Петрова сăмах пачĕç. Вăл Пушкăртстанри ĕççыннисене, партипе совет органĕсене тăван поэтăмăрăн Константин Ивановăн ырă ĕçне, ĕмĕр сӳнми ятне хисеплесе чысланăшăн пĕтĕм чĕререн тав турĕ.

Туслăх каçĕнче Пушкăртстан поэчĕ, Салават Юлаев ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ Муса Гали, Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ работникĕ Александр Галкин, Нина Артемьева сăвăçсем хăйсен поэта асăнса çырнă сăввисене вуласа пачĕç.

— Константин Иванов 90 çул тултарни вăл — пĕтем халăх уявĕ. Чăваш халăхĕ ун пек аслă поэт пуррише чăннипех те телейлĕ. Вунçичĕ çулхи каччă «Нарспи» поэмăна çырса хăйĕн ятне вилĕмсĕр турĕ. Çулсем, ĕмерсем иртĕç — Константин Иванов ячĕ яланах сӳнми çалтăр пек ялкăшса тăрĕ,— терĕ Социализмла Ĕç Герои

СССР Государство премийĕн лауреачĕ, пушкăрт халăх поэчĕ Мустай Карим.

Сцена çинче — Чăваш АССРĕн К. Иванов ячепе хисепленекен премийĕн лауреачĕ Чăваш АССР государство юрăпа ташă ансамблĕ. Слакпуç енчи чăваш халăх юррисем илемлĕн те уçăмлăн янраса каяççĕ. Поэт сăввисемпе чăваш композиторĕсем çырнă юрăсем чĕрене тыткăна илеççĕ.

Юрă хыççăн юрă, ташă хыççăн ташă. Театра пынă çынсем чăваш артисчĕсен пултарулăхне хапăл туса кĕтсе илни пире пурне те савăнтарчĕ.

Туслăх каçĕнче КПСС Пушкăрт обкомĕн секретарĕ Т. И. Ахунзянов, парти обкомĕн культура пайĕн заведующийĕ К. Г. Тухватуллина, тăванла республикăри партипе совет органĕсенче ĕçлекен ответлă работниксем пулчĕç.

— Константин Иванов таланчĕ, унăн вилĕмсĕр ячĕ пире, пушкăртпа чăваш халăхĕсене, пĕр-пĕрин хушшинчи туслăха çирĕплетме мĕн тери пулăшнине каласа пама сăмах та çитес çук.

Ĕлĕкхи саманара хĕн-хурпа терт курса пурăннă чăваш халăхне Октябрь хăйĕн ырлăхне пачĕ. Хальхи саманара пурăнакан чăваш çыннисем хăйсен пултарулăхĕпе, ĕçченлĕхĕпе çĕршыва савăнтараççĕ.

Константин Ивановпа Андриян Николаева çуратнă халăх ытти тăванла халăхсем хушшинче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне тупрĕ. Эпир сире коммунизм строительствинче малашне те çĕнĕ çитĕнÿсем тума ырлăх-сывлăх сунатпăр. Пирĕн туслăх çулсерен вăй-хăват илсе пытăр, Константин Ивановăн çутă ятне ĕмĕр-ĕмĕр çÿлте тытар,— терĕ КПСС обкомĕн секретарĕ Т. И. Ахунзянов.

## Белебейре

Эпир Уфаран Белебей хулине çул тытатпăр. Çанталăк лайăх. Йĕри-тавра куç тулли илем. Хĕвел çутипе вĕçĕ-хĕррисĕр йăлтăртатса выртакан симĕс калчасем. Вăрмансем, сăрт-тусем, нефть вышкисем... Пуян çав Пушкăртстан.

Акă — Белебей. Симĕс хула. Пур çĕрте те вырăс, пушкăрт, чăваш юррисем янăраççĕ.

Кунти пĕр урама, К. В. Иванов вĕреннĕ икĕ хутлă шкул çурчĕ патне, асăну хăми уçма хулари ĕççыннисем

йышлăн пухăннă. Савăнăçлă митинг пуçланчĕ. Ăна, ăш сăмах каласа, КПСС хула комитечĕн секретаре Н. С. Калиничева уçрĕ.

— Эпир савăнатпăр: çак урамра, çак çуртра хăı вăхăтĕнче чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, вилĕмсер «Нарспи» авторĕ, пирĕн ентешĕмĕр Константин Васильевич Иванов вĕреннĕ. Эпир Ивановăн чаплă юбилейне пушкăрт халăх поэчĕ Мажит Гафури çурални 100 çул çитсе килнĕ кунсенче ирттеретпĕр. Çак аслă поэтсен ячĕсем яланах пирĕн чĕрере пурăнаççĕ. Вĕсен произведенийĕсем пире пурнăçа юратма, Тăван çĕршывшăн паттăр кĕрешме хавхалантараççĕ. Эпир вĕсен умĕнче ĕмерĕмĕр пуç таятпăр,— терĕ КПСС Белебей хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Г. И. Николаев.

Митингра РСФСР писателесен Союзĕн правленийĕн секретарĕ, Чăваш АССР писателĕсен Союзĕн правленийĕн председателĕ Анатолий Емельянов, Белебейри педучилище студентки Валентина Евстафьева тата ыттисем сăмах каларĕç. Вĕсем пурте К. В. Иванов чăваш халăхĕн чапĕпе мухтавĕ, хамăр тăван культурăшăн пĕтĕм вăй-хала парса ĕçлеме чĕнекен çын пулнине пысăка хурса хакларĕç.

Асăну хăмине витнĕ шурă пусмана сирсе илеççĕ. Асăну хăми çине çапла çырса хунă: «Çак çуртра 1902—1903 çулсенче чăваш литературин никĕсне хывнă Константин Васильевич Иванов писатель вĕреннĕ».

Аслă поэтăмăр вĕреннĕ шкул çурчĕ вырнаçнă урама К. В. Иванов ятне пама йышăннă.

Каçхине хулари ĕççыннисем строительсен культура çуртне пухăнчĕç. Кунта К. В. Иванова сума суса литературăпа музыка каçĕ пулса иртрĕ.

## Силпи енче, Слакпуçĕнче

Слакпуç. Çак ял умĕнче эпир ĕмĕрех пуç таятпăр. Кунта, асамлă та илĕртӳллĕ вырăнта пирĕн юрату, чăваш халăхĕн мухтавлă поэчĕ Константин Васильеви Иванов çуралнă. Куç умне поэт ача чухне çӳренĕ вырăнсем, ешĕл айлăмсем, ту-сăртсем туха-туха тăраççı Пĕр çӳллĕрех сăрт тӳпине шурă чулсемпе: «Кашлатаr Иванов вăрманĕ»,— тесе çырса хунă. Унтан инçех т мар И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш государ-

ство университетĕнчи литература пĕрлешĕвĕн эмблеми— çунатлă урхамах куçа илĕртет. Ăна курсан, кунтан, Иванов юратнă вырăнсенчен, çамрăк литераторсем вăй-хал илсе çула тухнăн туйăнать.

Слакпуçне, поэт юбилейне пирĕнпе пĕрле Уфаран КПСС Пушкăрт обкомĕн культура пайĕн заведующийĕ К. Г. Тухватуллина, пушкăртсен паллă писателĕсем Амир Гареев, Нажиб Асанбаев, Гульфия Юнусова килнĕ. Çавăн пекех эпир кунта поэтăн тăван йăмăкĕпе, Евгения Васильевна Ивановăпа, тĕл пултăмăр. Эпир пурте ăна татах та нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунтăмăр.

Евгения Васильевна пире Кĕçтенттин пиччĕшне чыслама килнĕшĕн пĕтем чĕререн тав турĕ.

Юлашки çулсенче К. В. Иванов музейĕ те çĕнĕ экспонатсемпе пуянланнă. Кунта хăнасем, çĕршыври паллă писательсем панă парнесем те нумай.

Музей поэт пурнăçне, вăл литературăра тунă пархатарлă ĕçе анлăн кăтартать.

Ял варринчи ятарласа хатĕрленĕ вырăнта К. В. Иванова сума суса митинг пулса иртрĕ. Ăна кунти «Дружба» колхоз председателĕ С. Г. Гадельшин уçрĕ. Митингра Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ М. Н. Яковлев колхозник, Слакпуçĕнчи вăтам шкул директорĕ Г. Г. Макаров, Белебейри педучилищĕре учителте ĕçленĕ А. А. Кухарева сăмах тухса каларĕç. Савăнăçлă митинга пухăннисем чăвашпа пушкăрт писателĕсен сăмахĕсене, поэтсен сăввисене ăшă кăмăлпа итлерĕç.

Митинг хыççăн Слакпуç ĕçченĕсем Чăваш государство юрăпа ташă ансамблĕн пысăк концертне курса савăнчĕç.

Поэт юбилейне ирттерме килнĕ хăнасем Константин Иванов ячĕпе уçнă парка асăнмалăх йывăççем лартса хăварчĕç, Слакпуç çывăхĕнчи илемлĕ вырăна, Силпие кайса курчĕç.

Слакпуçĕнчи литература уявĕ пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ çуллен çирĕпленсе пынине тепĕр хут кăтартса пачĕ.

КПСС Белебей райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Р. Т. Евбатыров пире Пишпӳлеке ăсатса янă чухне çапла каларĕ: «Константин Иванович Ухсай Яккăвĕ çуралнă яла килекен çул яланах такăр пултăр, эсир ăна ан манăр. Пирĕн çакăн пек ырă туслăх ĕмĕре пытăр»,— терĕ.

## Пишпӳлеке ҫитсен

Белебейрен Пишпӳлеке каятпӑр. Тӗлӗнмелле: кӗтмен ҫӗртен тӳпери хӗвел пӗлӗт айне кӗчӗ. Ӑшӑ, сиплӗ ҫумӑр ҫуса иртрӗ. Пӗтӗм уй-хир, ҫаран тепӗр хут анлӑн сывласа янӑн туйӑнчӗ.

Пишпӳлексем пире кӗтсе илме ҫул ҫинех, Белебей чиккинех тухнӑ. М. Горький ячӗпе хисепленекен колхозри паллӑ механизатор, Социализмла Ӗҫ Геройӗ Петр Васильевич Сергеев аллинче ҫӑкӑрпа тӑвар.

— Эпир сире, тус-тӑванӑмӑрсем, пӗтӗм чӗререн хисеплесе, ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илетпӗр,— терӗҫ пире пишпӳлексем.

Кунти КПСС райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ А. Ф. Ахметов район пурнӑҫӗпе, ӗҫӗ-хӗлӗпе кӗскен паллаштарчӗ.

Пишпӳлексем К. В. Иванов юбилейне лайӑх хатӗрленнӗ. Районти «Ҫутӑ ҫул» хаҫат поэта сума суса ятарласа страницӑсем кӑларнӑ. Библиотекӑсенче поэт пурнӑҫӗпе пултарулӑхне кӑтартакан выставкӑсем йӗркеленӗ.

Пишпӳлекре эпир В. И. Ленин памятникӗ умне, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра вилнӗ воинсен ячӗпе лартнӑ палӑк умне чечек ҫыххисем хутӑмӑр.

Аслӑ ҫулпуҫӑмӑр ячӗпе хисепленекен площадьре пулса иртнӗ митинга халӑх депутачӗсен район Совет ӗҫтӑвкомӗн председателӗ В. И. Леонтьев уҫрӗ, КПСС райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ А. Ф. Ахметов сӑмах каларӗ.

— Пишпӳлек ҫыннисем К. В. Иванова, вилӗмсӗр «Нарспи» авторне, хӑйсен ентешӗ тесе шутлаҫҫӗ. Эпир унпа мухтанатпӑр. Пирӗн район ҫӗрӗ талантсемпе пуян. Кунта Фатих Карим, Ярлы Карим поэтсем, Габдулла Ахметшин драматург, Карим Хакимов ҫуралнӑ. Ҫичӗ ҫын Совет Союзӗн Геройӗ, икӗ ҫын Социализмла Ӗҫ Геройӗ ятне илме тивӗҫлӗ пулнӑ,— терӗ вӑл.

Митингра КПСС Чӑваш обкомӗн секретарӗ А. П. Петров сӑмах каларӗ. Вӑл районти ӗҫҫыннисене пирӗн К. В. Иванова хисеплесе чысланӑшӑн, унӑн ҫутӑ ячӗшӗн пирӗнпе пӗрле савӑннишӗн пӗтӗм чун-чӗререн тав турӗ, пурнӑҫра, ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тума ырлӑх-сывлӑх сунчӗ.

Чӑваш писателӗсен Союзӗн правленийӗн председателӗ А. В. Емельянов, ВЛКСМ Пишпӳлек райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ Т. Ф. Ахметзянов, Ҫирӗклері

вăтам шкулта вĕрентекен Н. М. Ерастова учительница сăмах каларĕç. Вĕсем К. В. Иванов пултарулăхĕ, ырă ячĕ ĕççыннисене çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарни çинчен, аслă поэта юратни çулсерен вăйланса пыни çинчен каларĕç.

Пушкăрт писателĕсем Амир Гареев, Нажиб Асанбаев, Гульфия Юнусова хăйсен сăввисене вуларĕç, эпир те, чăваш поэчĕсем, митингри çынсене хамăр произведенисемпе паллаштартăмăр, К. В. Иванова халалласа çырнă сăвăсене вуларăмăр.

Тепĕр кунне Пишпӳлекре акатуй пулчĕ. Унта та вырăс, пушкăрт, чăваш, тутар тата ытти тăванла халăхсен сăвви-юррисем янăрарĕç.

Пушкăртра пулнă кунсем пирĕн асра ĕмĕрлĕхе юлчĕç.

*1980.*